**Сарă хĕр**

Эсĕ, сар хĕр, çав тери
Мĕншĕн чипер пулнă-ши?
Эсĕ кулса калаçни
Мĕншĕн пит илемлĕ-ши?

Ваййа-мĕне тухсассăн,
Шăпчăк пекех янăран,
Е ташлама тытăнсан,
Лăпкă шыв пек юхатăн...

Утса-утса пынă чух
Кăкăр тулли шур кĕмĕл
Шăнкăртатса çеç пырать —
Çамрăк чуна вылятать.

Пилĕк тăрăх сарă çӳç
Вут çĕлен пек явăнать.
Сар çĕçкĕн те çавăнтах
Вĕл-вĕл туса çеç тăрать.

Е ват çынна куратни,
Е яшшине куратни —
Пуринпе те юмахлан,

Çан-çурăма хумхатан...

Эсĕ, сар хĕр, çав тери
Мĕншĕн чипер пулнă-ши?
Сана курсан çамрăк пуç
Ма шухăша каять-ши?

1919

*Ахах, И. Сарă хĕр: [сăвă] // Ахах, И. Атьăр социализмшăн çапăçма / И. Ахах. – Шупашкар, 1972. – С. 54-55.*